Миграци службин Республика кунĕ умĕн

# 14 çулхисем паспорт илчĕç

***Паян çул çӳрев хакĕсем пысăккине пăхмасăрах халăх пĕр вырăнта лармасть. Тăтăшах çул çинче вăл. Çĕршыв чиккисем «уçăлнăранпа» ют çĕршыва та вырăс-чăваш çыннисем ытларах çӳреме пуçларĕç, пирĕн патăмăра та Раççей гражданлăхне ыйтса килекенсем ӳсрĕç. Çак ӳкерчĕкре Раççейре пурăнакансемшĕн Раççей гражданлăхне çирĕплетекен тĕп документ – Раççей гражданинĕн паспорчĕ – чи малти вырăнта. Унсăрăн паян пĕр утăм та тума çук. Юлашки çулсенче РФ гражданинĕн паспортне 14 çулта пама пуçланăран ку ĕçĕн ответлăхĕ те ӳсрĕ. Муркаш Енре алла пĕрремĕш хут паспорт илекен çамрăксемпе ĕçлесси еплерех пулса пырать-ха? Ку ыйту çине паян Раççейри Федераллă Миграци Службин Чăваш Республикинчи Управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн пуçлăхĕ Зоя Михайловна СОРОКИНА хуравлать:***



– Раççейри Федераллă Миграци Службин Чăваш Республикинчи Управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн тĕп ĕçĕ вăл – патшалăхăн миграци политикине тытса пырасси, çак ĕçри саккунлăха малта тăратасси, гражданство тата паспорт çинчен калакан законодательствăсене тĕрĕс пурнăçласси. Вĕсем çинче никĕсленет те ĕнтĕ 14 çула çитнĕ çамрăксене пĕрремĕш паспорт парасси. Çакна эпир ответлăха туйса пурнăçлатпăр. Алла пĕрремĕш хут тĕп документ илекенсем паспорта хисеплеччĕр, хăйсем Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулнипе мăнаçланччăр тесе вĕсемшĕн çак пĕлтерĕшлĕ куна асра юлмалла ирттерме тăрăшатпăр. Паян çакăн пек черетлĕ мероприяти, – терĕ вăл РФ Миграци Службин ЧР Управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пунктĕнче çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче 14 çул тултарнă çамрăксен пĕр ушкăнне паспортсем панă май.

Çулталăк пуçланнăранпа çу уйăхĕ пуçланиччен асăннă служба пĕтĕмпе 921 çынна РФ гражданинĕн паспортне панă: камăн вăхăт иртнипе паспорта улăштарма срок çитнĕ, кам хушамат улăштарнă, камăн вара паспорта çухатнипе РФ Миграци Службин ЧР Управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пунктне çитмелле пулса тухнă. Çакă çеç паллă, кашниех хăйĕн ыйтăвне вăхăтра тивĕçтернĕ. Паспорт илнисем хушшинче 154-шĕ – 14 çулхи хĕрсемпе каччăсем. Асăннă кун та территори пунктĕнче 16 яшпа хĕр алла çĕнĕ паспорт илчĕ. Вĕсенчен пĕри эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Елена Кириллова. Лена Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче пурăнать. Туслă çемьере 3 ача. Лена – асли. Ашшĕ – предприниматель, амăшĕ – Йӳçкассинчи ваттисен çурчĕн ĕçченĕ.

– Паспорт илнишĕн тата çак телейлĕ саманта районта Республика кунĕ ирттерес умĕн асра юлмалла йĕркеленĕшĕн çак ĕçшĕн ответлă çынсене тав тăватăп. Алла паспорт илни пурнăç çине, çĕршывпа республика тата район аталанăвĕ çине ответлăрах пăхма хистет, – терĕ апрелĕн 14-мĕшĕнче 14 çул тултарнă Елена Анатольевна РФ Миграци Службин ЧР Управленийĕн Муркаш районĕнчи территори пункчĕн пуçлăхĕнчен Зоя Михайловна Сорокина аллинчен паспорт илнĕ хыççăн **(сăн ӳкерчĕкре)**.

Пирĕн хушăмăрта, каларăм ĕнтĕ, чикĕ урлă çӳрекенсен йышĕ ӳсрĕ. Кунпа пĕрлех Раççейре пурăнас текенсен хисепĕ те хушăнсах пырать. Апла пулсан Раççей Федерацийĕн гражданинĕн паспорчĕн пĕлтерĕшĕ те ӳсет.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Ватăсене пулăшатпăр



## «Маттурсем!»

Нумаях пулмасть Кашмаш шкулĕнче «Ыр кăмăллăх эрни» иртрĕ.

Уроксем хыççăн иккĕмĕш класс ачисем хăйсен вĕрентекенĕпе, Елена Алексеевнапа, Надежда Ермолаевна Иванова ватă пенсионеркăна пулăшма васкарĕç.

Надежда Ермолаевна ĕмĕрĕпех «Собода» хуçалăхра колхозникра ĕçленĕ, ĕç ветеранĕ. Унăн сăн ӳкерчĕкĕ хăй вăхăтĕнче хуçалăхри Хисеп хăми çинче те çакăнса тăнă. Надюш кинемей ĕçре яланах малтисен ретĕнче пулнă. Халĕ вăл пĕччен пурăнать, 80 çула çывхарса пырать.

Ачасене кăмăллăн кĕтсе илчĕ кинемей. Лешсем вара тӳрех ĕçе пикенчĕç: урамри çӳп-çапа шăлса тасатрĕç, пĕчĕк урапапа вак-тĕвек кирпĕчсене турттарса купаларĕç.

Надюш кинемей ачасен ĕçĕпе кăмăллă юлчĕ.

– Маттурсем! - терĕ вăл ачасене мăйăрпа хăналаса.

**Вика ТИХОНОВА,**
**Кашмаш шкулĕнчи 3-мĕш класра вĕренекен.**

**Сăн ӳкерчĕкре: шкул ачисем аслисем ертсе пынипе ватăсене пулăшма яланах хатĕр.**

Ырă ĕçсен çулталăкĕ

# *Çыннăн ĕçĕ те, чунĕ те ырă пултăр*

Пĕтĕм тĕнчери çемье кунне халалласа Катькас ял библиотеки çемье уявне ирттерчĕ. Палăртнă кун çемьесем библиотекăна васкарĕç. Кунта вĕсене Катькасри пуçламăш шкул вĕренекенĕсем кĕтсе илчĕç. Çак шкулта вĕренекенсем – библиотека тусĕсем – чи активлă вулакансем. Эпир библиотекăра тĕрлĕ мероприяти ирттеретпĕр. Катькас шкулĕнче вĕренекенсем яланах кашни мероприятие активлă хутшăнаççĕ. Çапла майпа вĕсем нумай çĕннине пĕлеççĕ, хăйсен тавракурăмне аталантараççĕ. Пире пулăшса ырă ĕç тăваççĕ. А.В. Угарова библиотекарь уява ертсе пычĕ, çемье пирки калаçу ирттерчĕ. Çемье пирĕн пурнăçра пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртса хăварчĕ.

Çак мероприятие эпир ырă ĕçсен çулталăкĕпе те çыхăнтартăмăр. Ырă ĕçсем çинчен ваттисем, паллă ăсчахсем, çыравçăсем нумай каласа хăварнă. Çынсен ыррине асра тытмалли, усаллине манмалла пирки ват çынсем нумай вĕрентсе каланă. Ачасем ыр кăмăллăх çинчен сăвăсем вуларĕç, ваттисен сăмахĕсене каларĕç. Тĕл пулу вăхăчĕпе усă курса библиотека ертӳçи шкул ачисене, библиотека фондне çĕнĕ кĕнекесемпе пуянлатма пулăшакансене тав турĕ, асăнмалăх парнесем пачĕ.

Пирĕн библиотека Мускаври «Пушкин библиотеки» çĕнĕ информаци технологийĕсене пулăшакан коммерциллĕ мар фонд проектне хутшăнса 280 кĕнеке илме пултарчĕ. Икĕ комплектран тăракан кĕнекесем илме çичĕ пин укçа кирлĕ пулчĕ. Пулăшма ыйтнă кашни çын пире май пур таран пулăшу кӳчĕ. Манăн вĕсене ятранах асăнса хăварас килет, Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Г. Лебедев, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ертӳçи Н.Г. Ванеркин, Шупашкарти 1312 номерлĕ автоколоннăн генеральнăй директорĕ Л.П. Кольцов, Калайкасси шкул директорĕ И.В. Осипова, библиотека тусĕсем-вулаканĕсем - В. Н. Волкова, Н.С. Ванеева, А.В. Егоров, Е.В. Иванова, С. М.Краснова, И. В. Яковлева, З.Ю. Петрова, Ф.А. Серова, Катькасри пуçламăш шкул ĕçченĕсем - О.В. Матвеева, В. Н. Угарова, Н. В. Никольская, А.В. Сальникова, ялти амбулаторинче вăй хуракансем – Э.В. Егорова, А.А. Охлина, Н. Ф. Романова, Е.Ф. Шадрина. Эпĕ вĕсене пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватăп. Çынна пулăшакан яланах пуян теççĕ. Эсир те пуян пулăр, сирĕн кĕсьере укçа-тенкĕ нихăçан та ан таталтăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сире.

Ырă кăмăллăхăн вĕçĕ çук. Библиотека фондне тăтăшах юрату çинчен çырнă кĕнекесемпе А. А. Охлина пуянлатать. Çакăн йышши романсене Н.А. Миронова та илсе килчĕ. В. П. Кольцов библиотекăна детективлă кĕнекесемпе пуянлатрĕ. В.М. Угарова 130 авторăн 230 кĕнекине килти библиотекăран пирĕн пата илсе килчĕ. Пурне те, пурне те тепĕр хут питĕ пысăк тав!

Н.М. Кондукторова ертсе пынипе уява пухăннисене шкул ачисем илемлĕ концертпа савăнтарчĕç. Уяв питĕ хаваслă иртрĕ, пурте кăмăллă юлчĕç. Çавра сĕтел хушшинче хăнасем çамрăклăха аса илчĕç, ачасен пултарулăхĕ пирки сăмахларĕç, çак мероприятие йĕркелекенсене тав сăмахĕ каларĕç. Малалла та çакăн пек пĕрле пухăнса канăва интереслĕ ирттересси çинчен калаçса татăлчĕç.

**А. УГАРОВА,**
**Катькас ял библиотекин ертӳçи.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, без права строительства на них:**

**– земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:170901:560, местоположение: участок находится примерно в 519 м по направлению на юг от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, дом 17, площадью 5800 кв.м.;**

**– земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:170901:565, местоположение: участок находится примерно в 511 м по направлению на юг от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, дом 17, площадью 6100 кв.м.;**

**– земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:170901:563, местоположение: участок находится примерно в 619 м по направлению на северо-восток от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, дом 17, площадью 6000 кв.м.;**

**– земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:170901:564, местоположение: участок находится примерно в 621 м по направлению на северо-восток от ориентира здание школы, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Сятракасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Школьная, дом 17, площадью 6000 кв.м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободных земельных участков к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, без права строительства на них:**

**– земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:18271201:45, местоположение: участок находится примерно в 240 м по направлению на северо-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Актай, ул. Южная, дом 1, площадью 6000 кв.м.;**

**– земельный участок, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:18271201:44, местоположение: участок находится примерно в 245 м по направлению на восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, д. Актай, ул. Южная, дом 1, площадью 6000 кв.м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка к распределению на правах аренды, для ведения личного подсобного хозяйства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:070505:108, местоположение: участок находится примерно в 115 м по направлению на северо-восток от ориентира жилой дом, расположенного за пределами участка, адрес ориентира: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, д. Шомиково, ул. Ториково, дом 1, площадью 1099 кв.м.**

**Заявления от граждан принимаются в течении месяца со дня выхода настоящей публикации по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 2-12-66.**

**Открытое акционерное общество «Моргаушский кирпичный завод» сообщает о созыве внеочередного собрания акционеров ОАО «Моргаушский кирпичный завод» 20 июня 2008 года. Место проведения – с.Моргауши, ул.Восточная, д.1, здание общества. Начало регистрации 13.00 часов, окончание регистрации 14.00 часов.**

**Начало собрания – 14.00 часов.**

**ПОВЕСТКА ДНЯ:**

**1. О преобразовании Открытого акционерного общества «Моргаушский кирпичный завод» в Закрытое акционерное общество «Моргаушский кирпичный завод».**

**2. Об утверждении Устава ЗАО «Моргаушский кирпичный завод».**

**3. О подтверждении полномочий руководящих органов общества, избранных собранием акционеров 10.04.2008г.**

**Список лиц, имеющих право участвовать на годовом собрании акционеров, составлен по состоянию на 01 июня 2008 года.**

**Справки по телефону: 2-13-47.**

**При себе обязательно иметь паспорт.**

**СОВЕТ ДИРЕКТОРОВ.**

**ПРОДАЮ ДОСКИ, БРУС, ПОДТОВАРНИК, ШТАКЕТНИК, Б/У МЕТАЛЛИЧЕСКИЕ ТРУБЫ. ВСЕ В КРЕДИТ! Тел.: 8-905-345-31-09.** 1-6.

**Срочно продаю однокомнатную квартиру по ул. 50 лет Октября с общей площадью 25,1 кв.м. Цена договорная. Тел.: 8-927-854-63-03, 2-18-66 (домашний). Света.**

**СХПК ПЗ им. Е. Андреева требуются доярки и пастухи. Оплата своевременная. Обращаться по тел.: 2-11-97.**

**Пĕрре пăруланă хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-666-36-53.**

**Продаю ВАЗ-21093 2001 года выпуска, двигатель-1500, инжектор, цвет синий металлик, пробег 117 тыс. км., сигнализация, ц. замок, автомагнитола. Тел.: 8-917-655-27-05.**

**Спутниковые антенны *ТРИКОЛОР* с установкой, регистрацией и обслуживание. Тел.: 8-905-345-77-19.** 1-12.

***ИНКУБАТОР РЕАЛИЗУЕТ СУТОЧНЫХ БРОЙЛЕРОВ И НЕСУШЕК С 17 МАЯ 2008 Г.* Адрес: Моргаушский район, д. Шатракасы, ул. Полевая, д. 2 (бывшая столовая колхоза «Гигант»).**
**Телефон для справок: 8-917-672-63-68.** 4-5.

**Продаю кирпич: силикатный, красный одинарный М-150, М-125, красный полуторный пустотный М-125, КББ, керамзит, гравмассу, красный половняк. Тел.: 8-903-358-20-97, 44-20-97.** 3-15.

**Куплю пух, перо, старое, новое. Тел.: 8-903-379-01-23.**

**Халăхран хаклă хакпа вăкăр, тына, ĕне ашăн тата чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 8-909-304-08-81.**

**23 мая в Моргаушском РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи и других фабрик России.**


ОАО «Чувашхмельпром» выражает глубокое соболезнование заведующей юридическим отделом С.В. Мусаевой в связи с тяжелой утратой - смертью отца
**ИЛУГИНА**
**Виктора Ивановича.**


**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
**АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.**
**ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.**
**Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru**

**Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.**
**Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.**

**Объем 1 усл. печатный лист.**
**Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.**
**Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.**

**ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**
**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.**
**Дежурный по номеру Белов А.П.**
**Номер подписан 20.05.2008 г.**
**Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.**
**Заказ Тираж 3637.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.